## Тайма пуç юррăрсемшĕн

Филипп Миронович Лукинпа тата унăн творчествипе иртнĕ вăрçă хыççăн Саратоври консерваторире паллашма тӳр килчĕ. Иккĕмĕш курсра вĕреннĕ чух унăн «Ирхи юрă» ятлă юррине юрларăм, çакă юрă манăн чĕрене хумхантарчĕ, хăйĕн илемлĕ кĕввипе ĕмĕрлĕхех асра юлчĕ.

Çавăн чухнех юрă авторĕпе тĕл пулас шухăш çуралчĕ. Манăн ĕмĕт пурнăçланчĕ. Эпĕ вĕреннĕ вăхăтра Филипп Миронович икĕ хутчен Саратова пырса кайрĕ. Вăл эпир мĕнле вĕреннипе, пурăннипе интересленчĕ. Вăрçă хыççăн Чăваш Республики валли профессиллĕ юрăçсем кирлĕ пулнă. Çав ыйту ăна хытă хумхантарнă.

Филипп Миронович юррисене яланах хамăн программăна кĕртеттĕм, мĕншĕн тесен вĕсем мана питĕ килĕшетчĕç. Шупашкара ĕçлеме килсен унпа тата çывăхрах паллашрăм. Вăл ун чухне Чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне ертсе пыратчĕ, унăн художествăллă руководителĕ тата аслă дирижерĕччĕ. Эпĕ те çав коллективрах ĕçлеме пуçларăм. Çултан-çул манăн репертуар Филипп Миронович юррисемпе пуянланса пычĕ. Ман валли ятарласа пĕччен юрламалли тата хорпа юрламалли юрăсем çырчĕ вăл. Сăмахран, «Чĕре юрри», «Хăна юрри», «Ĕç маякĕсем», «Тулли кăмăлпа», «Юрататăп, çĕршывăм, сана», «Хăмла пахчи», «Çĕршывăм, савăн» тата ытти нумай юрăсем.

Унăн юррисем халăх интонацийĕпе тата тĕрлĕ ритмсемпе питĕ пуян, хăйĕн юррисенче вăл халăх шухăш-ĕмĕтне, унăн кăмăлне уççăн кăтартса парать,

çавăнпа юррисем халăх хушшинче анлăн сарăлаççĕ, хумхантараççĕ, нумайлăха асра юлаççĕ, юратнă юрăсем пулса тăраççĕ. Пиçнĕ-пиçмен юрăсене халăх хушшине кăлармасть Филипп Миронович, нумай вăхăт хăйĕн чунĕнче тытса çӳрет. «Çĕршывăм, савăн» юрă вара хамăр республикăра çеç мар, кӳршĕ республикăсенче те сарăлчĕ. Ăна çармăссем те, тутарсем те, пушкăртсем те «Пирĕн юрă» теççĕ. Паянхи пекех астăватăп: Польшăра тата Югославире гастрольте пулнă чух унăн «Çĕршывăм, савăн» тата «Хăмла пахчи» юррисене тăвăллăн алă çупса йышăнчĕç.

Хаклă Филипп Миронович, Сире çуралнă кун ячĕпе саламласа вăрăмран та вăрăм ĕмĕр, пысăк телей, ырă сывлăх сунатăп. Тăван халăха, пĕтĕм совет халăхне хăвăрăн пултарулăхăрпа малашне тата ытларах савăнтарасса шанса тăратăп.

*М. Денисов*,
РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ,
Чăваш АССР халăх артисчĕ.

Коммунизм ялавĕ, 1983. Июлĕн 3-мĕшĕ.